Çĕр ĕçченĕн çулталăкĕнче

# Технологи вăй илсех пырать

Иртнĕ хĕл вĕçĕнче ăратлă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетекен «Свобода» ял хуçалăх производство кооперативĕн Кашмашри сысна ферминче тĕплĕ реконструкци ĕçĕсем




хыççăн сыснасем самăртмалли çĕнĕ сарай хута кайрĕ. Малалла çеç пăхакан Кашмашсем çĕнĕ сарайĕнче йăлтах çĕннине кăна вырнаçтарнă: автоматикăлла шыв ĕçмелли вырăнсем, автоматикăлла кормушкăсем, тислĕк кăлармалли çĕнĕ оборудовани т. ыт. те.

Çĕнĕ методикăпа ўсекен сысна çурисем ку сарайĕнче талăкне 600-700 грамм таран ўт хушмалла. Паян çакă пурнăçа кĕрсе пырать те хуçалăхра. Çулталăк пуçланнăранпа районĕпе «Свобода» хуçалăх районта пуринчен те ытларах пĕтĕмĕшле ўт хуштарнă: 603 центнер. Ку ўсĕм пĕтĕмпех çĕнĕ технологипе ĕçлекен сарайпа çыхăннă.

Паян «Свобода» хуçалăхра сыснасен пĕтĕмĕшле йышĕ 1533 пуç. Кунта çĕнĕ технологипе ĕçлекен сарай тулли пулнине те каламасăр иртме çук. 1200 пуç сысна унта паян. Çĕнĕ сарай тулли хăватпа ĕçлеме пуçланăран хуçалăхра сыснасен йышĕ те пĕлтĕрхи çак вăхăтринчен ўснĕ: 102 процент. Çура илесси вара, пĕлтĕрхипе танлаштарсан, 109 процент пулать: пĕтĕмпе 2883 пуç çура илнĕ кунта.

Производство кăтартăвĕсемпе тата туллинрех паллашсан хуçалăхра кашни 100 ама пуçне 1293 çура, кашни тĕп амаран 10,5 çура, тĕрĕслемеллисенчен 9,3 çура илни курăнать. Çак çулпа аталанакан «Свобода» хуçалăх экономика тĕлĕшĕнчен тĕреккинчен тĕлĕнме пулать-и вара? Çук.

Ĕçсем асăннă фермăра кал-кал пыни коллектива 5-мĕш çул ертсе пыракан Виталий Васильевич Никитин ăсталăхĕнчен те килет.

– Çĕнĕ технологипе ĕçленин уссине курма пуçларăмăр. Фермăра пурĕ 18 çын ĕçлет пулсан, çĕнĕ технологипе ĕçлекен сарайĕнче иккĕнех пĕтĕм ĕçсене пурнăçлама ĕлкĕреççĕ. Кăтартусем пурри пире татах тăрăшарах ĕçлеме ыйтать, – терĕ иртнĕ çул ĕçĕсемпе «Чи лайăх ферма заведующийĕ» хисепĕ ята тивĕç пулнă В. Никитин.

Хуçалăх çитес хĕл кунĕсем валли те выльăх апачĕ çителĕклĕ янтăлани сысна ĕрчетессипе Кашмашсем хĕл кунĕсенче те маххă памаççех тесе çирĕплетме май парать.

**А. БЕЛОВ.**

**Автор сăн ўкерчĕкĕ.**

Юн кунхи рубрика

# Саккун вăл пуриншĕн те пĕрре

***Паянхи рубрикăна Муркаш районĕпе ĕçлекен шалти ĕçсен пайĕн аслă дознавателĕ Л.А. ЯДЫКОВА ертсе пырать.***

## Вĕлерессипе хăратнăшăн

**Апчарти М. М. Седлова милици ĕçченĕсем мĕншĕн тытса кайрĕç-ши? Ялта темĕн калаçакан та пур.**

**А. ИВАНОВ.**

Çапла, çурла уйăхĕн 20-мĕшĕнче Апчарти асăннă гражданин тĕлĕшпе çакнашкал йышăну тума тиврĕ. Çак кун эрех сыпса самаях «паттăрланнă» М.М. Седлов хăйсем хушшинчи ăнланулăх пулманнипе мăшăрĕпе Н.С. Седловапа хирĕçӳ пуçланă. Мунча верандинче вăй-хăватне ниçта чикеймен арçын арăмне тапса-çапса пĕтернĕ. Хирĕçӳ вăхăтĕнче хайхискер алла мăлатук илсе вĕлерессипе те хăратнă.

Асăннă тĕслĕхре РФ УК 116-мĕш статйин 1 пайĕнче тата 119-мĕш статйин 1 пайĕнче пăхнă преступлени паллисем пуррине шута илсе М. Седлов тĕлĕшпе уголовнăй ĕç пуçарма тиврĕ.

## Çĕçĕ тетте мар

**Юлашки вăхăтра çын çине çĕçĕ сĕкленĕ тĕслĕхсем районта пулнă-и? Вĕсем тĕлĕшпе уголовнăй ĕçсем пуçарнă-и?**

**И. ПАВЛОВА.**

Çурла уйăхĕн 16-мĕшĕнче Шетмĕпуç ял тăрăхĕнчи Автанкасси ялĕнче çакăн пек ĕç пулса иртрĕ. Олег Иванович Сорокин Л. Матвеев хуçалăхĕнче кил хуçипе кăмăлсăр ларутăрура ыйтăва çĕçĕпе татса пама пуçланă. Хайхискер кил хуçине майĕ тĕлĕнчен çĕçĕпе чикнĕ. Инкек тўсекен район больницин хирурги уйрăмне лекнĕ.

Çак «ĕçре» Раççей Федерацийĕн Уголовнăй Кодексĕн 115-мĕш статйин 1 пайĕнче пăхнă преступлени паллисем пуртан асăннă «паттăр» тĕлĕшпе уголовнăй ĕç пуçартăмăр.

## Ăнлантару ĕçĕ туса ирттертĕмĕр

**Йĕрке пăсакана кун пирки каласа ăнлантарни уголовнăй ĕç пуçланинчен çăмăлрах мар-ши?**

**Е. СИМОНОВА.**

Шалти ĕçсен пайĕн ĕçĕнче эпир вулавçă хускатакан мелпе те нумай усă курма тăрăшатпăр. Кун пек чух йĕрке пăсакана пысăк инкек тăвасран сыхласа хăварасси – пирĕн тĕп тĕллев. Акă иртнĕ кунсенче Оринин салинче пурăнакан 33 çулхи хĕрарăм тĕлĕшпе çакнашкал усă калаçу ирттерме тиврĕ. 12 тата 7 çулхи ывăлĕсене пăхасси çине алă сулнă Н.Н. Викторова хăй пысăк инкек умĕнче тăнине ăнланмасть те пулас. Эрех серепине лекнĕскер тăтăшах ывăлĕсен канăвĕпе выхине татать. Ниçта та ĕçлеменскер тата ĕçлеме те кăмăл туманскер ачисене воспитани парассине хăй еккипе янă, вĕсене апатлантарассине тата кирлĕ хатĕрсемпе тивĕçтерессине иккĕмĕш вырăна хăварнă. Çапла пурăнса ачисем çине алă çĕклеме те имененскер пирĕн калаçуран тивĕçлĕ пĕтĕмлетўсем тăвĕ-ши?

## Сысна çури мыскари

**Пĕлес килет, паян сысна усракансем сахал, анчах çура вăрлакансем пур-и?**

**В. ВАСИЛЬЕВ.**

Сайра-сайра та, анчах кунашкал майпа та йĕрке пăсакансем пур-ха. Акă авăн уйăхĕн 3-мĕшĕнче С. Даниловăн хресчен (фермер) хуçалăхĕнче сысна фермин хуралçи пулса ĕçлекен Н.М. Федоров ют пурлăхпа пуйма шут тытса 20 сехет тĕлĕнче сысна сарайне кĕрсе 10 тата 8 килограмм таякан икĕ сысна çури «хĕстерсе» тухать, хресчен (фермер) хуçалăхне пурĕ 5000 тенкĕлĕх сăтăр тăвать. «Малалла пăхакан» «предприниматель» кăшт вăхăт иртсен çак çурасене Кĕрекаçра пурăнакана пĕрне çур литрла, теприне 100 тенкĕлле сутса бизнес тăвать. Халĕ çав бизнес-плана унăн саккун умĕнче хуравламе тивет. Ун тĕлĕшпе уголовнăй ĕç пуçартăмăр, тĕпчев пырать.

Вырăнсенчи çыхăну уйрăмĕсенче

# «Пĕрлешӳллĕ хуçалăх пулăшать»

***Çапла пĕтĕмлетрĕ районти çыхăну уйрăмĕн Шурчари уйрăмĕн ертӳçи Алена Витальевна Антонова (сăн ўкерчĕкре). Унăн сăмахĕсем «Герой» хуçалăх ертӳçи Р. Тимофеев хуçалăх ĕçченĕсене хаçат çырăнма пулăшни пирки пулчĕç. Пилĕк çул çак ĕçре вăй хуракан хĕр ĕç вăрттăнлăхĕсене алла лайăх илнĕ. Çавăнпах ĕнтĕ ун патĕнче ял çыннисем те час-часах пулаççĕ.***

***– Ялсем пĕчĕкленеççĕ пулсан та пирĕн енре пурăнакансем район хаçачĕ çырăнассине кашни çыраăнтару кампанийĕнчех мала хураççĕ. Акă кăçалхи пĕрремĕш çур çулта пирĕн çынсем «Çĕнтерӳ ялавне» 130 экземпляр илсе тăнă пулсан, иккĕмĕш çур çулта вĕсен йышĕ чылай ўсрĕ. Тĕслĕхрен, Шуркасси ялĕ пĕчĕккĕ, анчах кашни килтех район хаçатне çырăнаççĕ. Вăрăмойĕнче пурăнакансем те хăйсен пурнăçне «Çĕнтерӳ ялавĕсĕр» курмаççĕ. «Герой» хуçалăх ертӳçи Р. Тимофеев тăтăшах ведомствăлла çырăнтару йĕркеленĕрен халăх çак ĕçрен ютшăнмасть-пăрăнмасть. Çапла вара хуçалăх кашни çур çултах хаçат çырăнма вуншар пин тенкĕ укçа уйăрать, – терĕ кĕске калаçура Алена Витальевна.***

***Кунта кашнин пиркиех тав сăмахĕ кăна.***

**А. БЕЛОВ сăн ўкерчĕкĕ.**



Следстви пайĕнчен пĕлтереççĕ

# Эрех сутса пуйма тăрсан...

Сывă пурнăç йĕркишĕн кĕрешесси пирки çĕршыв шайĕнче те нумай калаçма пуçларĕç, анчах ялта пурăнакан хăш-пĕр «бизнесменсем» çак вырă шухăша пурнăçлама васкамаççĕ. Район пурнăçĕнчи пĕр тĕслĕх.

Пĕрремĕш çул мар ĕнтĕ çĕршывра «Апат-çимĕç продукчĕсен хăрушсăрлăхĕпе пахалăхĕ çинчен» Федераллă саккун вăйра. Унпа килĕшўллĕн нормативлă документсене пăхăнман, хăрушсăрлăхпа пахалăх удостоверенийĕ тата продукцие ăçта кăларни, патшалăх регистрацийĕ çук, усă курмалли вăхăт тухнă пулсан, çав продукт сывлăхшăн сиенлĕ шутланать.

Нормативлă актсене пăссах 2008 çулхи пуш уйăхĕнчен пуçласа Етĕрне районĕнче пурăнакан 60 çулхи Софья Васильевна Шашкина Мăн Сĕнтĕрти хăйĕн харпăрлăхĕнчи килĕнче пурнăç хăрушсăрлăхĕн требованийĕсене пăхăнман, сывлăхшăн сиенлĕ спиртлă шĕвеке каярахпа сутас тĕллевпе упранă.

2009 çулхи пуш уйăхĕн 25-мĕшĕнче кăнтăрлахи 11 сехет те 50 минутра Мăн Сĕнтĕрти Новая урамри 34-мĕш çуртри 30-мĕш хваттерте «Алкогольпе спирт продукцине, этил спиртне хатĕрлессине тата таварçаврăнăша кĕртессине патшалăх йĕркелесси çинчен», «Апат-çимĕç продукчĕсен хăрушсăрлăхĕпе пахалăхĕ çинчен», «Потребительсен прависене хўтĕлесси çинчен» федераллă саккунсене пăсса хăй реализацилекен спиртлă шĕвек çын сывлăхĕшĕн хăрушсăрлăх требованийĕсене пăхăнманнине пĕлсе тăрсах спиртлă шĕвек шăнăçĕнчен кĕленчене тултарнă шĕвек апат-çимĕç спирчĕ тесе С. Парфенова 39,4 градуслă шĕвеке 60 тенкĕпе 478 миллилитр сутать. Çапла вара С. В. Шашкина Раççей Федерацийĕн Уголовнăй Кодексĕн 238-мĕш статйинчи пĕрремĕш пайĕнче пăхнă преступление тунă. Çакăншăн унăн явап тытма тивĕ.

Ялсенче эрех тата спиртлă шĕвек сутакансем паянхи тĕслĕхрен тивĕçлĕ пĕтĕмлетўсем тăвасса тата эрех-сăра ĕçекенсем те хăйсен сывлăхĕшĕн çак «çăлкуçсенчен» епле инкек илнине ăнланасса шанатăп.

**Л. ДАВЛЕТШИН,**
**РФ прокуратури çумĕнчи Следстви комитечĕн ЧР следстви управленийĕн Етĕрнери следстви пайĕн следователĕ.**

Килти хушма хуçалăх

# Улмуççисене пулăшу кирлĕ

Çимĕççене пухса илнĕ хыççăн улмуççисене минераллă удобренисемпе апатлантармалла, вулă айĕнчи тăпрана кăпкалатмалла. Çак вăхăтра кашни тăваткал метра 2-3 килограмм органика (лайăх çĕрнĕ тислĕк, çĕрĕк тăпри, компост), 50-60 грамм суперфосфат, 15-20 грамм кали удобренийĕ хывмалла. Йывăç мĕн чухлĕ аслăрах – çавăн чухлĕ удобрени ытларах кирлĕ:

<u>3-5 çулхи йывăçа</u> – 150 грамм суперфосфат, 50 грамм кали, 25 килограмм органика удобренийĕ;
<u>5-7 çулхи йывăçа</u> – 250-300 грамм суперфосфат, 80-100 грамм кали, 30 килограмм органика удобренийĕ;
<u>12 çулхи тата унран аслăрах улмуççисене</u> валли икĕ хут ытларах виçе илмелле.

Удобренисене тăпрана сапмалла, 18-20 см тарăнăш кăпкалатмалла. Тымарĕсене амантасран йывăç туни çумĕнчи тăпрана 6-8 см тарăнăш кăпкалатсан çитет.

# Чиене мĕнле лартмалла?

Кĕр çитнĕ май пахчара та йывăçсем лартма вăхăт çывхарать. Чие йывăççи çулсерен çырла патăр тесен садра тĕрлĕ вăхăтра пулса çитекен 3-4 йывăç пулмалла. Вĕсем пĕр-пĕрне лайăх тусанланараççĕ. Кĕркунне чиене тăпра шăниччен 20-30 кун-ран кая юлмасăр лартмалла.

Чиене пахча хĕррипе пĕр рет, картаран е чикĕрен 2 метртан кая мар вырăн хăварса е пĕр çĕрти тăваткал лаптăка кашни йывăçа пĕр-пĕринчен 2,5-3,5 метра лартмалла.

Шăтăк тарăнăшĕ 40-50 см , анлăшĕ 80 см пулмалла. Унта 10-12 кг (пĕр витре) çĕрĕк тăпри е компост, 200-300 грамм суперфосфат, 40-60 грамм хлорлă е сернокислăй кали хывмалла.

Кали удобренийĕ вырăнне 400-600 грамм кĕл хывсан та юрать. Тăпра йўçекленхĕ чакарма 200-300 грамм вĕтетнĕ извеç хушсан аван.

Çаксем йăлтах пулас тухăçăн никĕсĕ пулаççĕ.

# Вăхăтра лартни пĕлтерĕшлĕ

Пахча ĕçĕпе интересленекенсем тата çак ĕçе пуçăнакансем çĕр çырлине (земляникăна) лартма кая юлмарăмăр-и-ха тесе ыйтаççĕ. Кĕскен калатăп: çук, юлман-ха.

Çурла уйăхĕн вĕçĕпе авăн уйăхĕн пĕрремĕш çурри çак культурăна лартса хăвармалли паха вăхăт шутланать. Кун пек чух калча хĕле кĕриччен тымарланма ĕлкĕрет, вăй илет. Çак вăхăтра лартса хăварнă çĕр çырли çитес çулах çырла пама тытăнать. Манмалла мар, тĕмсене пĕр-пĕринчен 15-20 см, ретсене 70-90 см хăварса вырнаçтармалла.

Кусарса лартма пĕр çулхи çамрăк калчасене илмелле. 2-3 çулхи тĕмсемпе ĕçленин усси çук: вĕсем начар чĕрĕлеççĕ, тухăçне те сахал параççĕ.

**А. СЕМЕНОВ.**